вучахне чӗртсе янӑ ҫулсене уҫать. «Ҫиҫӗм хыҫҫӑн аслати» - революци тапхӑрӗ.

Ҫыравҫӑ нумай пьесисене 1941-1945 ҫулхи вӑрҫӑ ҫулӗсене халаллanӑ. Вӗсем: «Куккук ҫаплах авӑтать», «Кӗмӗл пӗлӗтсем», «Ҫынпа ҫын пӗр пек мар». Акӑ илер-ха «Ҫӗпӗр дивизийӗ» («Сансӑр пурнӑҫ ҫук» ятпа та пӗлеҫҫӗ ӑна вулакансем) пьесине. Ку пьесӑна фронта кайнӑ, анчах каялла таврӑнман ҫамрӑк салтаксене халаллanӑ.

Унӑн сӑнарӗсем илӗртӳллӗ те, тавлашуллӑ та. Мӗншӗн тесен ҫыравҫӑ вӗсене пурнӑҫран илет. Пурнӑҫра темӗн те пулать: юратупа ырату та, ултавпа суя та, кӗвӗҫӳ те. Терентьевӑн пьесисем чӑваш театрӗсен репертуарӗнчен кайма та пӗлмеҫҫӗ. Ют халӑхсем те килӗштереҫҫӗ унӑн пьесисене. Тутарла, пушкӑртла, эстонла, украинла тата та ытти чӗлхесене куҫарса кӑларнӑ, вырӑсла та кӑтартаҫҫӗ вӗсене. «Хумсем ҫырана ҫапаҫҫӗ», «Ҫиҫӗм хыҫҫӑн аслати», «Ҫӗрпе хӗр» пьесисене Мускаври художество академи театрӗ сцени ҫинче те лартнӑ.

Драматург хӑйӗн мӑшӑрӗпе Мария Ивановнӑпа 50 ҫул ытла килӗштерсе пурӑннӑ. Анчах та 2014 ҫулхи ака уйӑхӗнче 89 ҫула ҫитсен ҫыравҫӑ пирӗнтен уйрӑлса кайнӑ. Мӑшӑрне вӑл «Манӑн ҫӑлтӑр тӳпере» ятлӑ пьесине халаллanӑ.

Николай Терентьев – 50 ытла пьесӑпа сценари авторӗ. Ӗҫне кура хисепӗ теҫҫӗ халӑхра. Чӑнах та, мӗн чухлӗ чаплӑ, хисеплӗ ятсем парса чыс тунӑ пирӗн паллӑ ентешӗмӗре. Вӑл - Чӑваш АССР искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ, РСФСР культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, Чӑваш халӑх ҫыравҫи, К.В.Иванов ячӗллӗ Патшалӑх премин лауреачӗ. «Кӑшнаруй ялӗн хисеплӗ гражданинӗ» ят парса та хисеп тунӑ пирӗн ентеше.



*Мӑшӑрӗпе Мария Ивановнӑпа* ( 1980 ҫ.)

**Островский ҫинчен мӗн калатӑн?**
**Островский – вӑл хӑй пӗр тӗнче!**
**Пултарӗ унпа танлашмашкӑн**
**Терентьев чӑваш ҫӗрӗнче.**
**Театр ӗҫне упрамашкӑн**
**Терентьевсем кирлӗ нумай.**
**Вӗсем чӗрӗ сывлӑш парсассӑн,**
**Пурнатпӑр эпир те чылай!**
**Терентьев, эс пурӑн та пурӑн**
**Ялта, хулара – халӑхра!**
**Терентьев тӗнчи пултӑр сыншӑн**
**Ялан чӗрере те чунра!**

## Библиографи:


1 Прокопьев, В. Чӑваш халӑх писателӗ / В. Прокопьев // Канаш тӑрӑхӗн ятлӑ-сумлӑ ҫыннисем. - Шупашкар, 2005. - С.310-317.
2 Никифорова, В. В. Терентьев Николай Терентьевич / В. В. Никифорова // Чувашская энциклопедия. - Чебоксары, 2011. - Т. 4 С-Я. - С. 212-213.
3 Григорьева, К. Драматург патӗнче хӑнара: ҫул ҫӳрев / К. Григорьева // Канаш ен. - 2008. - 25 ака(№ 52/53). - С. 2.
4 Терентьев, Н. Т. "Эпӗ чунпа - ял ҫынни": [чӑваш халӑх писателӗ Николай Терентьев ҫинчен] / Н. Т. Терентьев ; Роза Власова калаҫнӑ // Канаш ен. - 2012. - 24 нарӑс (№ 22/23). - С. 5.
5 Алексеев, В. Чӑваш драматургийӗн ҫӑлтӑрӗ: [Чӑваш халӑх писателӗ Николай Терентьевич Терентьев пурнӑҫран уйрӑлса кайрӗ] / В. Алексеев // Канаш ен. - 2014. - 16 ака (№ 29). - С. 1. - (Астӑвӑм).
6 Кузнецов, Г. В. Ҫӑлтӑр тӳпене ҫӗкленчӗ: [Николай Терентьевич Терентьев ҫинчен аса илни тата ӑна халаллanӑ сӑвӑ] / Г. В. Кузнецов // Канаш ен. - 2014. - 25 ака (№ 32). - С. 2.
6 Самана сакки сарлака [Текст] : [чӑваш драматургийӗн патриархӗ Николай Терентьевӑн тата унӑн мӑшӑрӗн Раҫҫей Федерацийӗн сутӗҫ отличникӗн Мария Терентьевӑн пурнӑҫ саманчӗсем] // Тӑван Атӑл. - 2019. - нарӑс (февраль) (№ 2). - С. 56-64 : сӑн ӳкерчӗксем.



**Канаш тӑрӑхӗн тӗп библиотеки**
**Информаципе библиографи пайӗ**
**Пухса хатӗрлекенӗ Л. И. Евгеньева**
**Тел. 49-7-00, e-mail:**
**library-shihazan@yandex.ru**


**Канаш тӑрӑхӗн тӗп библиотеки**
**Информаципе библиографи пайӗ**

# «Халӑх юратакан талант»



## *Чӑваш халӑх ҫыравҫи Николай Терентьев ҫуралнӑранпа 100 ҫул ҫитнӗ май*

## (1925-2014)

**Шӑхасан сали**
**2025 ҫ.**

*Николай Терентьев – чăваш драматургийĕн талантлă ăсти. Вăл – 50 ытла пьеса авторĕ. «Терентьевăн театрĕ» пур тесе хăюллăнах калама пулать. Унăн пьесисем тăван республикăн тата пирĕн нумай нациллĕ çĕршывăн куракансене кăсăклантараççĕ».*

*Ю.Зубков*

*вырăс критикĕ*

Чăваш халăх çыравçи, Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ, Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, К. В. Иванов ячĕллĕ Патшалăх премийĕн лауреачĕ Николай Терентьевич Терентьев Канаш тăрăхĕнчи Кăшнаруй ялĕнче 1925 сулхи ака уйăхĕн 17-мĕшĕнче вăтам хресчен кил-йышĕнче çуралнă.

Хайсен ялĕнчи тулли мар вăтам шкултан, 1941 çулта Чурачăкри вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Шкула çӳренĕ тапхăрта савăнăçлă, хурлăхлă самантсем те пулнă çыравçăн.

***Пĕрремĕш класра вĕренсе тухнă май, юратнă учительници Евдокия Леонтьевна кăранташ парнелет. «Ударник» пултăн тесе. Саванăç! Кăранташăн пĕр вĕçĕ – хĕрлĕ, тепри – кăвак. Кĕскелсе алла кĕми пуличченех темĕн те ӳкерет ача çав кăранташпа. Тата тепĕр асра юлнă пулăм. Пионерсем ял тăрăх çӳресе кĕсьене улăм кĕлĕ пухаççĕ. Пĕррехинче кĕл ăшĕнче кăмакара катăлса юлнă хыт çăкăр таткине тупса, выçăскер, сахăр ĕмнĕ пек ĕмсе янине те çыравçă ĕмĕрлĕхех астуса юлать. Ара савăннă-çке!***

Хурлăхне ĕнтĕ… Пĕр тĕслĕх асне ĕмĕрлĕхех кĕрсе юлнă. 1937 çул. Тĕрме çыннисене Çĕрпӳрен Çĕпĕре ăсатаççĕ. Колонна ял витĕр тухать: темиçе çĕр çын. Ашшĕне пама амăшĕ кăмака улми пĕçернĕ. Акă ашшĕ утса пырать. Аллине çĕклет. Ача çав çĕрулмине ашшĕне парасшăн. Пăшаллă, штыклă салтак ашшĕ çывăхне те ямасть ăна. Пăшалпа çеç хăратать.

Николай Терентьев чаплă драматург пулса тăрасси çаран синче çара уран чупса çӳренĕ чухнех пуçланнă. Вăл тăмран тĕрлĕ шăхличсем тунă, çĕçĕпе каскаласа пĕчĕк урапасем ăсталанă. Илемлĕх туйăмĕн тыткăнĕнче пулнă. Шкулта драма кружокне хутшăннă, сăвă, калав çырнă.

Вăрçă вăхăтĕнче темиçе çул хушши колхоз счетовочĕ тата учитель пулнă, ялти художествăлла пултарулăх кружокĕсен ĕçне хастар хутшăннă. Пулас драматурга тӳсме çук сивĕре оборона сооруженийĕсем тунă çĕре мобилизациленĕ. Çав кунсене çыравçă çапла аса илнĕ:

***«Урамра шартлама сивĕ тăнă. Сывлама йывăр. Куçсене хăварса пите мĕн май килнĕ таран хуплани çеç çăлнă. Çĕр пĕр метр тарăнăш е ытларах та шăнсаларнă. Пирĕн çын çӳллĕш траншейăсемпе окопсем чавмалла пулнă. Кĕреçесемпе ĕçлеме май килмен. Шăннă çĕре лумсемпе тата пуртăсемпе катнă. Ывăç тупанĕсем юнланса хăмпăланнă».***

Вăрçă çулĕнчех 1942 çулта Шупашкарти Чăваш театрĕн студийĕнче пысăк конкурс витĕр тухса Мускаври Луначарский ячĕллĕ театр искусствин патшалăх институчĕн Чăваш студийĕнче вĕренме пуçлать. Кунта вăл питĕ лайăх вĕренсе «Сталин стипендине» илме тивĕçлĕ пулать. Ку премии пирки вăл тĕлĕнсе çапла каласа панă:

***«Театр институтĕнче Сталин стипендине пурĕ 20 студент, вĕсенчен 8-шĕ чăваш студийĕнчен илнĕ. Лайăх вĕренсе тата хама типтерлĕ тытнăшăн çак стипендине илсе, ялана кулянса шутлаттăм: «Мĕнле-ха, манăн атте Сталин репрессийĕнчен шар курнă, шар курнă кăна мар, вилнĕ. Эпĕ вара унăн ячĕпе стипенди илетĕп?!»***

1947-50 çулсенче – Чăваш патшалăх драма театрĕнче актерта ĕçленĕ. 4 çул хушшинче 10 роль ытла вылянă: Сентиера («Айтар» П.Н.Осиповăн), Ахмара («Энтип» В.Т. Ржановăн), Ваня Земнухова («Çамрăк гварди» А.Н.Фадеевăн).

Театрта ĕçленĕ вăхăтра, гастрольсене кайсан, ял çамрăкĕсемпе хутшăнкаласах тăнă. Вара, хăйĕн те кĕтмен çĕртен «Сирень аллейи» ятлă лирикăллă пĕр пайлă пьеса çуралать. Тăван чĕлхене, тăван литературăна тĕплĕнрех тĕпчес тесе Чăваш педагогика институтĕнче, унтан аспирантурăра вĕренет. Пурнăсра татах тем шырать. Тен, савăнпа пуль, Мускаври литература институтне вĕренме каять.

Çав çулсем тĕлне Николай 6-7 пьеса çырнă. Вĕсенчен чи паллисем: «Çунатлисем те çĕр çинчех» («Çĕр çинчен вĕçме пуçлаççĕ»), «Мĕн-ши вăл телей», «Куккук çаплах авăтать».

Вăл спектакльсенче чăн-чăн театр улăпĕсем: Ольга Ивановна Ырсем – 1918 çулта Хусанта Чăваш театрĕн никĕсне хывакансенчен пĕри, СССР халăх артисчĕсем Борис Алексеев, Алексей Ургалкин, Вера Кузьмина, чаплă актер Виктор Родионов вылянă. Тĕлĕнмелле хăватлă сăнарсем тунă вĕсем çак пьесăсенче.

Пĕр вăхăтрах артист та, драматург та пулма çав тери йывăр. ***«Артист ĕçĕ кăна вицесĕр йывăр, кун вĕçнелле вăй юлмасть, чуна кăларса илет, касхи апата хăш чух çимесĕр выртни те пулнă. Драматург ĕçĕ те канăçсăр: ыйхă татмасăр, чĕрене сунтармасăр сăнар тума çук»*** - тенĕ çыравçă. Çапах та çул иртнĕçемĕн Николай Терентьев драматурги еннеллех сулăнать, пьеса хыççăн пьеса çырать. Вĕсенче çыравçă хăй лайăх пĕлнĕ, чун-чĕре витĕр кăларнă социаллă çивĕч ыйтусене тапратать. Унта кăтартнă хирĕçӳллĕ пурнăç, унти çынсен шăпийĕсем – чăвашра çуралнăскерсем. Сăнарĕсенчен чылайăшĕ – ял хуçалăх ĕçченĕсем.

Мĕнле пĕрпеклĕх пур-ха авторпа унăн сăнарĕсем хушшинче? Ял ĕçченĕ ырми-канми çĕр çинче тырпул туса илессишĕн ĕçлет. Терентьев вара литература ани çинче тĕрлĕ сăнарсем ӳстерет, яланах малалла та малалла вĕренет. Кил-йыш пурнăçĕ, юрату, çĕр, харпăрлăх, кăмăл-сипет – çак темăсене хускатать драматург кашни хăйĕн пьесинче.

14-16 çулхи шкул ачисем çинчен те шухăшлать çыравçă: «Çил çинчи Çеçпĕл», «Кĕмĕл пĕлĕтсем», «Атăл куçĕ». Çав çулсем – ачашăн питĕ кăткăс, пăтравлă та илемлĕ çулсем. Пĕчĕкçĕ этем пысăк çын пулма хатĕрленет. Ĕнтĕ вăл хăйне ача темест, мăн çын вырăннех хурать. Çав çулсенчи ачасене час-часах ашшĕ-амăшĕ те, верентекенсем те ăнлансах пĕтерейместчĕç. Çав кăткăс самантсене хăй пьесинче сутатма тăрăшать те çыравçă.

Вĕсемпе юнашарах хамăр халăх историйĕнчи чи çивĕч, чи асаплă тапхăрсене кăтартма тăрăшать драматург. «Çĕрпе хĕр» пьесăра – Пугачев вăрçине хутшăннă таркăн чăвашсен трагедийĕ. «Хумсем çырана çапаççĕ» драма И.Я.Яковлев Ульяновсем пулăшнипе Чĕмпĕрте чăвашсен чи малтанхи культура